Пирĕн ентешсен фронтри çулĕпе

# Рейхстаг çинчи автограф: Муркаш каччин алли кунта та çитнĕ

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çĕршыва сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ фашистла Германин хăватлă çарĕсем сехетпе мар, минутпа Мускав еннелле çĕнтерӳллĕн çĕмĕрттерсе-талпăнса пынă чух тепĕр тăватă çултан хĕнхур урапи айĕнчен тухса уçă сывлăш çавăрса илнĕ пирĕн салтаксем фашизм йăвине çитсе Рейхстаг çине çĕнтерӳллĕн алă пусасси пирки кам шутланă-ши? Никам та. Фронтра юн юхнă, тылри хĕрарăмсемпе салтак ачисен ĕç вăхăтĕнчех куçĕсем куççульпе тулнă. Никам шутламан çĕртен “Çĕнтерӳшĕн!” тесе атакăна çĕкленсе пуç хунă салтаксен тĕлĕнмелле паттăрлăхĕ харама кайман: Мускав патне çитнĕ фашизм машинине çапса аркатса ăна пирĕн çарсем каялла çавăрнă, хăйĕн йăвине хăваласа çитерсе юлашки сывлăшне кăларнă. Пĕтĕм халăх пĕрле пулса пурнăçшăн, Çĕнтерӳшĕн кĕрешни, вăрçă çулĕ çинче миллионшар çын пуç хуни ахаль иртмен.

Пĕтĕм халăх иртен пуçласа каçчен пурнăçшăн, Аслă Çĕнтерӳшĕн кĕрешнĕ: пĕрисем тылра ыйхă вĕçтерсе çĕр çывăрмасăр фронт валли хĕçпăшал, кĕпе-тумтир, çăкăр хатĕрлесе ăсатнă пулсан, фронтрисем пурнăçа шеллемесĕр фашизмпа çапăçнă, юлташĕсене çухата-çухата пулас ăрусем валли мирлĕ пурнăç пултăр тесе атакăна çĕкленнĕ, çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçу хирĕсенче пуçĕсене хунă. 1410 кун валакпа шыв юхнă пек çын куççулĕ юхнă...

Турай ял тăрăхĕнчи Анаткасси енчи тăватă ялтан çапăçу хирĕнче 194 çын пуç хунă: Анаткассинчен – 78, Тушкассинчен – 72, Çатракассинчен – 30, Кĕçĕн Чурашран – 14 паттăр. Нумай çемьерен вăрçă хирне иккĕн, виççĕн, тăваттăн, чылайăшĕн ашшĕсемпе ывăлĕсем те кайнă, пысăк пайĕ яла таврăнайман, мăнукĕсем ӳснине курайман. Акă Çатракассинчи Матвеевсен çемйинчен нимĕç фашисчĕсемпе çапăçма фронта пилĕк арçын, пиччĕшсемпе шăллĕсем, тухса кайнă, анчах нихăшĕ те тăван ене таврăнайман. Чыс та мухтав вĕсене паян пурне те.

... 1945 çулхи апрель уйăхĕнче пирĕн çарсем Берлина çитсе тăшманăн çирĕплетнĕ йăвине штурмлама пуçлаççĕ. Ирĕнкаçăн хула урамĕсенче çапăçу чарăнмасть. Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Пĕрремĕш Белорусси фрончĕн малта пыракан подразделенийĕсем Эльба юхан шывĕн çыранĕнче иккĕмĕш фронт уçнă Америка çарĕсемпе тĕл пулаççĕ. Гурий Махров çапăçнă 5-мĕш ударлă арми Берлинăн Тиргартен паркĕ еннелле наступление каять. Апрелĕн 30-мĕшĕнче 11 сехетре пирĕн çарсем Рейхстага штурмлама пуçлаççĕ. Майăн 2-мĕшĕнче ирхине ăна хӳтĕлекенсем парăнаççĕ, 15 сехет тĕлне пĕтĕм Берлин пирĕн çарсем умĕнче аллине çĕклет. Гурий Ананьевич Махров механик-телеграфист пулса çапăçнă Пĕрремĕш Белорусси фрончĕн 5-мĕш ударлă арми салтакĕсем çапăçусене Тиргартен паркĕнче вĕçлеççĕ. Майăн 3-мĕшĕнче çĕнтерӳçĕ-салтаксем Зигсалле урамĕпе парăнтарнă Рейхстаг патне тухаççĕ. Гурий Махровпа унăн юлташĕ Алексей Никитин (Шупашкар районĕнчи Тĕкĕрç ялĕнчен) кăшт пушă вăхăтра Рейхстаг çине алă пусса хăварма шутлаççĕ.

Кам-ха вăл Гурий Ананьевич Махров? Рейхстаг çине алă пусса хăварнă çĕнтерӳçĕ-салтак Муркаш енченех-и? Çак




ыйту Евгений Долматовский поэт хăй вăхăтĕнче Рейхстаг çине алă пусса хăварнă салтаксен шăпипе интересленмен пулсан, историре шурă пăнчă пулса юлнă пулĕччĕ. Анчах... Паян эпир унта Муркашсем алă пусса хăварнине те пĕлетпĕр ĕнтĕ.

<u>Гурий Ананьевич Махров 1923 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче Тушкасси ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă.</u> Вăхăт çитсен Мăн Чурашри вăтам шкулта вĕреннĕ. Турă çырнинчен пăрăнаймăн теççĕ те, Гурий шкул пĕтернĕ тĕле фашистла Германи пирĕн çĕршыв çине сĕмсĕррĕн вăрçăпа тапăнать. Ĕнер шкул пĕтернĕ Гурий та вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çĕршыв ирĕклĕхне хӳтĕлеме тухса каять. Ун хыççăн фронта ашшĕ Ананий Александрович тата 1926 çулта çуралнă шăллĕ Герман каяççĕ. Вăрçă тути-масине кашниех ытлăçитлĕ тӳссе ирттернĕ вĕсем, анчах тăшман умĕнче пуç усман, йывăрлăхсене парăнман.

Вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенчех фронта кайнă Гурийăн малтанхи вăхăтра Хĕрлĕ Çарпа пĕрле чакса йывăрлăхсене пайтах тӳссе ирттерме тивнĕ. Анчах çĕршер миллионлă халăхăмăрпа Аслă çĕнтерĕве шанса ир те каç атакăна çĕкленнĕ. Харьков патĕнчи пĕр хаяр çапăçура пулемет расчетĕнче çапăçнă чух нимĕç снайперĕнчен хăйĕн икĕ юлташне çухатать. Çапах пулемет шăпланмасть: Гурий Махров связист ăна хăй аллине илсе тăшмана çунтарма пуçлать. Анчах снайпер та çывăрмасть иккен, пулеметчика сылтăм куçран персе лектерсе янах шăммине амантса стройран кăларать. Йывăр суранлă салтак госпитале лекет, анчах сывă юлать. Госпиталь хыççăн Гурий Махрова киле яраççĕ. Ку çапăçăва ветеран аса илнинчен: “Йывăрччĕ каялла чакма. Çавăнпах пĕр утăм çĕре те çапăçусăр парас килместчĕ. Пĕррехинче Дон çыранĕнче хӳтĕленӳ позицийĕ тытаттăмăр. Эпĕ ун чухне пулеметчиксен отделенийĕн командирĕччĕ. Приказ – пĕр утăм та каялла чакмалла мар. Шăрăх. Хăмăшсем хушшинче выртатпăр. Унччен те пулмарĕ, пуля шăхăрса иртрĕ те пĕр пулеметчик хăяккăн йăванса кайрĕ. Тепĕр пуля шăхăрчĕ те тепĕр пулеметчик стройран тухрĕ. Снайпер! Çак вăхăтра фашистсем атакăна çĕкленчĕç. Вĕсене çывăха ярсан çеç пеме пуçларăмăр та нумай фашиста леш тĕнчене ăсатрăмăр. Анчах нимĕç снайперĕ мана та çав çапăçура аллинчен вĕçертмерĕ”.

Тăван çĕршыв тăрăх тăшман утнă чух аманса киле таврăннă салтакăн та чунĕ вырăнта мар. Куççульпе кĕтсе илнĕ амăшне Гурий çапла каласа йăпатать: “Савăн, анне, сывă таврăнтăм. Манăн юлташа авă снаряд ванчăкĕ вĕлерчĕ. Вăт ку хуйхă”. Нимĕçсене Мускав патĕнче çапса аркатса анăçаллă хăваламма пуçласан 20 çулхи каччă каллех фронта мобилизациленет, механик-телеграфист пулса тапăнакан хамăрăн çарсем хушшинчи çыхăнушăн ответлăха хăй çине илет. Çумăр çăвать-и е юр вĕçтерет, бомба çурăлатьи е тăхлан çумăр чашлатать – Гурий Махровăн çыхăну линийĕ кулленех юсавлă, яланах стройра. Хаяр çапăçусемпе пирĕн ентеш службăра тăракан 5-мĕш ударлă арми хамăр çĕршывран фашистсене хăваласа тухса Польшăна ирĕке кăларать, Германи çĕрĕпе пырса Берлин патне çитет. Тăшмана миллионшар совет çыннисен пурнăçĕшĕн тавăрса хăюллăн нимĕçсен тĕп хулине штурмлать, Рейхстага çитсе унта çапăçакан совет салтакĕсемпе çыхăну йĕркелет, çапăçу чарăнсан Тушкасси çынни унта алă пусса хăварать. Ку ĕç çапла пулса иртнĕ: 1945 çулхи майăн 2-мĕшĕнче 15 сехетре фашистла Германи капитуляциленсен, тепĕр кунне Гурий Ананьевич Махровсен çар чаçĕ Рейхстаг патне çитсе тухать. Çуртăн тул енчи снаряд ванчăкĕсемпе тата пульăсемпе ванман шурă стенисем совет салтакĕсен çырăвĕсем айне пулнă ĕнтĕ. Çавăнпа та Гурийпе унăн юлташĕ Алексей Никитин Рейхстага кĕрсе вестибюльти таса вырăна хăйсен аллине пусса хăвараççĕ. Вăрçăран таврăнсан пĕрре мар аса илнĕ çак куна пирĕн ентешĕмĕр. Урăхла епле-ха. Вăрçă вут-çулăмĕ витĕр пĕрремĕш кунран майлах утса тухнă салтак фашизмăн тĕп йăви патне çитсен епле алă пусмасăр иртсе кайĕха? Г. Махров хăйĕн юлташĕн хулпуççийĕ çине тăрса вестибюльти стена çинче юлнă таса вырăна “МАХРОВ, НИКИТИН ИЗ ЧУВАШИИ – ВОЛГА – БЕРЛИН” тесе çырса хăварать. Аслă вăрçăра совет салтакĕ тунă паттăрла ĕçсенчен нихăшĕ те асăрханмасăр, ятсăр юлманран рейхстаг çине пирĕн ентешĕмĕр алă пусни те вăрçă пурнăçĕнче пăнчă лартни пулман.

Рейхстаг стени çине алă пусиччен пирĕн ентеш ытти пиншер салтак пекех фашистсемпе çапăçнă, нимĕç ачисене вилĕмрен çăлнă. Епле çӳçенмĕнха совет салтакĕ Г.Махров çунакан çуртран нимĕç ачине çăлса кăларнине, выçă ачана салтак котелокĕнчен тăрантарнине – вăрçă ачасем валли марçке. Çаксене курнă хыççăн рейхстаг çине Çĕнтерӳ ялавĕ çакнине хăй куçĕпе курнă Гурий Ананьевич çав вăхăтра мĕн шутланине паян кам калайĕши?

**Рейхстаг ентешсене тĕл турĕ**

Гурий Ананьевич вăрçă чарăннă хыççăн яла таврăнса тăван хуçалăхра ĕçлеме пуçласан, унăн ентешĕ Алексей Александрович Александров çарта юлнăскер тата çар тивĕçĕсене Германи çĕршывĕнче пурнăçлаканскер, пĕррехинче Берлина экскурсие каять. Каять те рейхстаг вестибюлĕнче хăйсен ялĕнчи Махров алă пусса хăварнине курать, юлташĕ чĕрĕсывă иккенне пĕлсе яла çыру çырать. Çапла вара Рейхстаг вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă юлташсем хушшинчи туслăх кĕперне çĕнĕрен çĕклет.

**Мирлĕ пурнăçра**

Рейхстаг çине алă пуснă ентешĕмĕр вăрçăран таврăнсан та мирлĕ пурнăçра алă усса ларман. Хусанти финанспа экономика институтне ăнăçлă вĕренсе пĕтернĕ фронтовик Советски райисполкомĕн финанс пайĕн инспекторĕнче ĕçленĕ, чылай хушă Суворов ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхра çĕр ĕçĕнче вăй хунă, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин вут-çулăмĕ витĕр тухнă Александра Григорьевна Углевапа çемье çавăрнă, тăван хуçалăхра ĕçпе ырă ят хăварнă.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Вăхăт иртсен те паттăрлăх манăçмасть

# Фронтри манăн кун-çулăм

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсем историе шаларах та шаларах юлса пыраççĕ. Çапах та çав хăрушă çулсем пирки пирĕн самантлăха та манма юрамасть.

Манăн çар операцийĕсене пуçласа 1940 çулта финн вăрçинче хутшăнма тиврĕ. Кунти çар операцийĕсем 1940 çулхи март уйăхĕнче вĕçленчĕç. Кун хыççăн пире Армян Республикипе Турци чиккине хураллас ĕçе вăйлатма вырнаçтарчĕç, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра Англипе Францин агрессивлă планĕсем – Кавказпа кунти нефтьчĕ.

1941-мĕш çулта пире киле яма хатĕрлерĕç, анчах... Вăрçă пуçланни чылай плансене тĕппипех улăштарчĕ. Пире десант операцийĕсене хатĕрлеме пуçларĕç те 1942 çулхи февральте Крымри Керчь хули патне ячĕç. Пирĕн унта плацдарм тытса тăмаллаччĕ. Çухатусем икĕ енĕпе те пысăкчĕ. Пире тинĕсри карапсем çинчи артиллери пысăк тĕкĕ пачĕ. Майăн 22-мĕшĕнче вара пирĕн пысăк çухатусем тӳснĕ хыççăн Кубане чакма тиврĕ. Акă Сочи те инçе мар. Çак вăхăтра Тĕп командованин приказĕ çитрĕ: “Пĕр утăм та каялла чакмалла мар!” Фашистсем Кавказа алла илессипе темĕнле тăрăшрĕç пулсан та, çакăн хыççăн пирĕн çарсем тек чакмарĕç. Нимĕçсем те малалла каяймарĕç. Кĕçех хӳтĕленӳре тăнă пирĕн çарсем тапăнма пуçларĕç. Пире Крым проливĕ урлă Керчь çывăхне десанта ячĕç. Питĕ хаяр çапăçусем пулчĕç унта. Никам та чакасшăн марччĕ. Çакăнти пĕчĕк çĕр лаптăкĕ çинче эпир 1943 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕччен тытăнса тăтăмăр. Çак кун хамăр авиаци пулăшнипе нимĕçсен оборонине татрăмăр та тек вĕсене чарăнса тăма ирĕк памарăмăр, хула хыççăн хула ирĕке кăларса малалла ыткăнтăмăр. Çакăнти çапăçусенче мана “Паттăрлăхшăн” медальпе наградăларĕç. 1944 çулхи майăн 9-мĕшĕнче Крыма нимĕçсенчен пĕтĕмпех тасатрăмăр.

Крым хыççăн пире Белоруссие ирĕке кăларма куçарчĕç. Пĕрре Анăçалла талпăннă пирĕн çарсем никам тытса чарайми хăват пек курăнатчĕç, куллен майлах хуласемпе ялсене фашистсен тыткăнĕнчен хăтаратчĕç. 1944 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнче мана Хĕвел тухăç Пруссире йывăр амантрĕç. Кунтах эпĕ “Хĕрлĕ Çăлтăр” ордена тивĕçрĕм.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи ăру хура-шурне самаях курчĕ. Çавăнпа та манăн тек нихăçан та вăрçă ан пултăр тесе калас килет. Мирлĕ пурнăçа сыхлакансем вара ялан сыхă пулччăр. Яш ăрусен ачалăхĕпе яшлăхĕ вут-çулăмра ан иртчĕр. Çакна кашни асра тыттăр!

**Василий САМУКОВ.**

Çармăçкасси ялĕ.

**P. S.Çак çырăва вăрçă участникĕ Василий Тимофеевич Самуков хăй виличчен 2003 çулхи çуркунне Александра Ивановна Николаевана парса хăварнă. Паян вăл çыру вулакансем патне çитрĕ.**

# Чăваш амăшне

**Кĕввипе сăвви Олег ЗАЛОГИНĂН**

**Исетерккĕ ялĕнче çуралса ӳснĕ, 8 ывăл пăхса ӳстерсе Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине ăсатнă, 4-шне кĕтсе илеймен паттăр хĕрарăма Т.Н. Николаевана халаллатăп.**

Таçта инçете тинкерсе вăл пăхать.
Хĕвел аннине-ши пĕр вĕçĕм сăнать?
Кăвар тата юн тăвĕсем хыçĕнче,
Унта вĕçленет пулмалла çак тĕнче?
Мĕн чухлĕ арсем, упăшка-ывăлсем
Килмерĕç киле вăл енчен. Пĕр-пĕччен
Хăварчĕç вĕсем кун-çула пиллекен
Чăваш амăшне, чăваш амăшне!
Тăрать, чăмăртанă вăл хăйĕн çумне
Ачашшăн чипер пĕчĕк çеç пепкине.
Хуплать аллипе çĕр çинчи çилсенчен,
Усал тата сивĕ хура вăйсенчен.
Шăваççĕ çулсем, пĕлĕтсен мĕлкисем.
Хӳхлеççĕ хăш чух çын пекех çумăрсем,
Ăна ăнланса-ши е, тен, шеллесе,
Кĕтме пăрахман çак чăваш амăшне.
Пур халăхăн никĕсĕ – чаплă ятсем,
Асра юлакан ентешсем-паттăрсем.
Тек çук çапăçу хирĕнчи çăлтăрсем –
Çунаççĕ çаплах ешерсе çеçкесем.
Мĕн чухлĕ арсем, упăшка-ывăлсем
Таврăнаймарĕç киле паянччен.
Парсам, Аслă Турă, телей ĕмĕрне
Нумай асап тӳснĕ чăваш амăшне.
Пурăнать халăхра аслă тивĕç те чыс.
Пуçтарăннă халĕ кунта пур ял-йыш.
Ку палăк – йăх пĕрлĕхĕн ятлă палли:
Анне – Ама Турă, тĕп çын, чи кирли.
Иртеççĕ кунсем, сирĕлеç пĕлĕтсем.
Пулаççĕ хĕвеллĕ, хавас куççульсем.
Савăнтарасчĕ паян, малашне
Ялан таса чунлă чăваш амăшне.
Чăваш амăшне...

Кадрсем

# Шкул пĕтерекенсене ял хуçалăхĕ кĕтет

Паян районти агропромышленноç комплексĕнче 3341 çын вăй хурать. Вĕсенчен 1305 çынни – хĕрарăмсем. Мĕн пур ĕçлекенрен 1969 çынни профессиллĕ пĕлӳ илнĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсен, вĕсене пулăшакан тата продукци тирпейлекен предприятисен ертӳçисем 15-шĕ аслă пĕлӳллĕ пулсан, 13-шĕ ял хуçалăх пĕлĕвĕллĕ. Ятарлă пĕлӳллĕ ертӳçĕсем – 6, вăтам пĕлӳллисем – 4.

Тĕп специалистсен шутĕнче аслă пĕлӳллĕ агрономсем –12, тĕп инженерсем – 13, тĕп зоотехниксем – 9, экономистсем –12, тĕп бухгалтерсем – 12, кадрсем енĕпе ĕçлекен специалистсем – 6, хăрушсăрлăх техникин инженерĕсем – 4, вĕсемпе пĕрлех ятарлă вăтам пĕлӳ илнĕ специалистсем – 45 çын.

Ял хуçалăхĕнче кадрсем çитменни унччен хи çулсенче те пулнă пулсан, паян та вăл хăйĕн çивĕчлĕхне çухатман-ха. Паян К.Иванов яч. хис., “Сеятель”, Чапаев яч. хис., “Агро-Урожай”, “Рассвет”, “Волга”, “Восток”, “Дружба” хуçалăхсенче пысăк квалификациллĕ специалистсем уйрăмах çитмеççĕ. Паян районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене 6 агроном, 6 инженер, 7 экономист, 4 бухгалтер, 10 зоотехник кирлĕ. Кусемпе пĕрлех хуçалăхсенче çĕнĕ технологипе ĕçлеме те механизаторсемпе водительсем, машинăпа ĕне сăвакансем, тракторист-комбайнерсем кирлĕ. Çулленех çур акипе вырмана тулли хăватпа ирттерме 346 –410 механизатор кирлĕ пулсан, паян ĕçсене 294 механизаторпах пурнăçлама тивет.

Мĕн тăватпăр-ха лару-тăрăва ырă енне улăштарма? Пĕлтĕр 547 çынна ĕçе илнĕ пулсан, вĕсенчен15-шĕ – çамрăк специалистсем. 3-шĕ – контрактпа тĕллевлĕ хатĕрленĕ специалистсем.

Район администрацийĕ, ял хуçалăх пайĕ, районти ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен предприятисем çамрăк специалистсене ĕçе вырнаçтарассипе, пурăнмалли çурт-йĕр тăвассипе, ипотека кредичĕсем илессипе яланах пулăшма хатĕр. Акă иртнĕ çул “2010 çулччченхи ялсен социаллă аталанăвĕ” тĕллевлĕ программăпа 8 çемье хăйсен пурăнмалли условийĕсене федераллă бюджетран 790000 тенкĕлĕх лайăхлатрĕç. Ялта пурăнакан тата ял хуçалăхĕнче ĕçлекен çамрăк специалистсен 6 çемйи 874240 тенкĕлĕх пулăшу илчĕ. Кунпа пĕрлех иртнĕ çул килти хушма хуçалăха аталантарма 833 çемье 122 миллион та 466 пин тенкĕ çăмăллатнă кредит илчĕ пулсан, ку ĕç кăçал та малалла пырать: январь – апрель уйăхĕсенче çак кредита 246 килти хушма хуçалăх 38 миллион та 69 пин тенкĕлĕх илчĕ.

Район ял хуçалăхĕнчи çамрăксемпе ĕçленине Президент стипендиачĕсем çуллен йышлă пулни те калать. Юлашки тăватă çул хушшинче çак хисепе 30 çула çитмен 19 специалист тивĕçрĕ.

Пĕлӳ илсе ĕçе вырнаçни çеç тухăçлă ĕçлесе пыма çителĕксĕр. Çакна ăнланса ял хуçалăхĕнчи специалистсем тăтăшах пĕлӳ ӳстерессипе ĕçлеççĕ. 2005 çулта “ Чăваш Республикинчи агропромышленноç комплексĕнче ĕçлекен ертӳçĕсемпе специалистсен квалификацине ӳстермелли институтра” 55 çын пĕлĕве ӳстернĕ пулсан, пĕлтĕр вĕсен йышĕ 74 çын пулнă, кăçалхи пĕрремĕш кварталта – 87 çын.

Ял хуçалăх ĕçĕ нихăçан та çăмăл пулман. Çавăнпа та кунти ĕç династийĕсем уйрăм тав сăмахне тивĕç. Тĕслĕхрен, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Архиповсен çĕр ĕç династийĕ 167 çулта. Династи пуçлăхĕ Александр Андреевич Архипов Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă. “Герой” хуçалăхри Бурцевсен çĕр ĕçĕнчи пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 122 çул. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Васильевсен династийĕ те ĕçпе палăраканнисен шутĕнче: Илья Серафимович Васильевăн 5 ывăлĕ те водитель ĕçне кăмăлланă.

Чыс та хисеп çĕр ĕçĕнче ĕçлекенсене пурне те.

Аслисен ĕçне çамрăксем те алăран вĕçертмессе шанса тăратпăр. Çавăнпа та кăçал вăтам шкул пĕтерекенсене Чăваш ял хуçалăх академине вĕренме кайма сĕнетпĕр. Паянхи куна академире Муркаш районĕнчи 106 студент пĕлӳ пухать. Кăçалхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствипе Чăваш ял хуçалăх академийĕ специалистсем тĕллевлĕ хатĕрлеме килĕшӳ тунă. Тĕллевлĕ специалистсем хатĕрлессипе район пĕлтĕр ял хуçалăх академине вĕренме кайма 19 направлени панă. Пĕлтĕр унтан тĕллевлĕ направленипе кайнă пĕрремĕш яшсемпе хĕрсем вĕренсе тухнă. Çиччĕшĕ паян хăйсен специальноçĕсемпе ĕçлеççĕ те ĕнтĕ.

Кăçал та эпир районти ял хуçалăхĕ валли тĕллевлĕ специалистсем хатĕрлес ĕçе малалла тăсатпăр. Вĕренме кĕме мĕнле документсем хатĕрлемелли паллă ĕнтĕ. Кăçал шкул пĕтерекенсем ял хуçалăхне суйласа илессе кĕтетпĕр. Килĕр! Йăнăшмăр!

**Н.СМИРНОВА,**
**ял хуçалăх пайĕн ертсе пыракан специалисчĕ.**